ХĔСМЕТ

# Патшалăхпа пытанмалла выляхансем те пур

## Çара каяссинчен тарса çӳренĕшĕн 9 çамрăка явап тыттарнă

**2011 çулхи призыв тапхăрĕнче Чăваш Енрен 3320 çамрăка хĕсмете тăратма палăртнă. Çав шутран 350-не – Шупашкартан. Çара кайма хатĕрленекенсене мĕнле çĕнĕлĕхсем кĕтнине пĕлме Чăваш Республикин çар комиссарĕпе Александр Мокрушинпа тĕл пултăмăр.**



**– Çуркуннехи призыв мĕнпе асра юлĕ?**

– Уйрăмлăх çукпа пĕрех. Нумаях пулмасть РФ Президенчĕ Дмитрий Медведев 18 çул тултарнă çамрăксене хĕрхенме, отсрочка пама ыйтнă. Чăнах та, тин çеç аттестат илнĕскерсене, аслă вĕренӳ учрежденийĕсене кĕмешкĕн тăрăшакансене тĕллевне пурнăçа кĕртме май памалла. Анчах влаç шайĕнче кунашкал йышăну кăларман. Официаллă мар çăл куççем пĕлтернĕ тăрăх – РФ Патшалăх Думи çак ыйтăва кĕçех пăхса тухĕ. Хальлĕхе шкултан вĕренсе тухакансене комисси яланхи пекех чĕнсе илет. Каччăсенчен чылайăшĕ салтака çуркунне каясшăн. Ку психологипе те çыхăннă пулĕ. “Пĕр çăва сиктеретпĕр, тепринче киле таврăнатпăр – вăхăт сисĕнмесĕр иртет”, – ăнлантараççĕ вĕсем çар комиссине. Юлашки вăхăтра хĕсмете хăй ирĕкĕпе каякан нумайланчĕ. Институт-университетра вĕренекен каччăсем иккĕмĕш курс хыççăн академи отпускĕ илсе салтак атти тăхăнаççĕ.

**– 3320 çамрăка салтака яма палăртнă. Ку миçе процентпа танлашать?**

– Салтака кайма юрăхлисен 10 процентне чĕнсе илетпĕр. Вĕсем пурте медицина комиссийĕ витĕр тухаççĕ. Хăшĕ-пĕри икĕ метр çӳллĕш пулин те 50 килограмм йывăрăш кăна. Вĕсене тухтăрсем çур çула яхăн тимлĕ сăнаççĕ. Кайран вара ĕçе тепĕр хут пăхса тухатпăр.

**– Чăваш Ен çамрăкĕсем мĕнпе ытларах чирлеççĕ?**

– Шăм-шак, мышца тытăмĕн хавшаклăхĕпе çыхăннă чирсем – пĕрремĕш вырăнта. Чĕре тытăмĕ япăх ĕçленине пула асапланакан чылай. Вар-хырăм чирĕсемпе нушаланакан сахалланнă, анчах вĕсен вырăнне психикăпа çыхăннисем нумайланнă. Ку пире питĕ хăратать. Медицина лайăх аталаннă, хăвăрт тĕрĕслемелли майсем пур, çавăнпа хăш-пĕр чире çийĕнчех палăртаççĕ. Паян хĕсмете иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче çуралнисем каяççĕ. Ку та пĕлтерĕшлĕ. Çав вăхăтра ачасене воспитани парассине мар, политикăна, бизнеса мала хунă. Ачасем “Пепси кола”, чипс тата ытти çурма фабрикат, фастфуд çисе ӳснĕ. Тăван çĕр-шыв умĕнчи парăма татма хатĕррисен шучĕ – 65%. Аслăраххисем çĕртме уйăхĕччен çара кайрĕç. Халĕ шкултан, вĕренӳ учрежденийĕсенчен вĕренсе тухнисене повестка пама вăхăт çитрĕ.

**– Уголовлă ĕçсемпе çыхăннă тĕслĕх тăтăшах тĕл пулать-и?**

– Кăçал Шупашкарта 19 тĕслĕхе шута илнĕ. 9 çамрăка условнăй майпа айăпланă, 80 пинрен пуçласа 120 пин тенкĕ таран штраф тӳлеттерме йышăннă. Условнăй айăплав срокĕ иртсен, штраф тӳлесен салтака пур пĕрех каймалла. Тарса çӳренин усси пур-ши? Патшалăхпа пытанмалла выляс кăмăллисен каярахпа явап тытмаллине манмалла мар.

**– Çар качăсене мĕнпе пулăшать?**

– Чи малтан çынсене хаклама, ырра усалтан уйăрма вĕрентет. Талăкра 24 сехет пĕр-пĕринчен уйрăлмасăр пурăнсан тантăшсене лайăххах пĕлсе çитетĕн. Чи пахи – салтакра пулнă çын чунпа, характерпа çирĕпленни. Çарта вĕренни пурнăçра кирлĕ пулатех.

**– Альтернативлă службăна суйлакансем пур-и?**

– Çак меслете хальхи вăхăтра йышăнмаççĕ. Ăна суйлакан çав тери сахал. Акă çак кунсенче пĕр яш ыйтса çырнă. Унччен маларах тепĕр каччă кăмăл тунăччĕ. Халĕ Смоленск облаçĕнче кочегарта тăрăшать. Ăна 4 пин тенкĕ шалу тӳлеççĕ. Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен чи малтан хăйсене спортра пиçĕхтермелле, стройпа утма хăнăхмалла. Хăшĕ-пĕри чăнах та алла пăшал тытма пултараймасть, вĕсене ăнланма пулать. Тĕн йăли-йĕркине çирĕп пăхăнакансем те пур вĕт.

**– Чăваш каччисене ырă тата çирĕп кăмăлшăн, ĕçченлĕхшĕн, тăрăшулăхшăн юратни вăрттăнлăх мар. Президент полкне каякансем республика ят-сумне ямаççĕ-и?**

– Чăваш Енрен Президент полкне кĕркуннесерен 15 яша ăсататпăр. Федерацин хăрушсăрлăх служби çак çамрăксене “ала витĕр” кăларать. Чăваш Ен Президенчĕ вĕсене хăй ăсатать. Çулсерен ашшĕ-амăшĕ, çар комиссариачĕ ячĕпе тав çыравĕсем килеççĕ. Президент полкĕнче хĕсметре тăнисем те унта çул тытакансемпе тĕл пулаççĕ, ăсатас умĕн сăмах калаççĕ. Вĕсемшĕн хальччен пите хĕретмен.

**Регина КУБАЙКИНА.**

# Корана чăвашла куçарнă

**Çак кунсенче И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн журналистика факультечĕн студенчĕсем вĕренсе тухаканăн квалификаци ĕçне хӳтĕлерĕç. Руслан Сайфутдинов «Сăваплă Коран куçарăвĕ» темăпа тухса калаçрĕ. Диплом кĕç-вĕç илекенскер ĕçе тĕплĕн пурнăçланă, самаях тар тăкнă. Руслан Корана чăвашла хăй куçарнă-çке-ха.**

Çĕрпӳ районĕнче Янтуш ялĕнче çуралса ӳснĕскере йывăр çак ĕçе пуçăнма мĕн хистенĕ-ши? «Ача чухне мана тĕне кĕртмен. Ӳсерехпе ислам тĕнне йышăнтăм. Атте – ингуш, мăсăльман. Ислам енне туртăннин сăлтавĕ юнра-тăр. Кукамай православие пăхăнать. Вăл вырăс чĕлхине питех ăнланмасть. Çавăнпа ятарласа ун валли Корана чăвашла куçарас шухăш çуралчĕ», – пĕлтерчĕ Руслан. Вăл ăна тăватă çул каяллах шĕкĕлчеме пуçланă. Паллах, Руслана çăмăл пулман, мĕншĕн тесен сăваплă çак кĕнекене ку таранччен чăвашла никам та куçарман. «Йывăрлăх чылай сиксе тухрĕ. Пĕрремĕш куçару пулнăран нимпе те танлаштарма çук. Православипе çыхăннă сăмахсемпе усă курас – пĕлтерĕшĕ улшăнĕ. Çавăнпа хăшĕ-пĕрне – араб сăмахĕсемпе, теприсене предложенипе ăнлантармалла пулчĕ», – сӳтĕлчĕ сăмах çăмхи. «Пĕччен пĕкĕ аваймăн», – тенĕ ваттисем. Çак ĕçре ăна тĕн енĕпе – Чăваш Ен муфтийĕ Альбир-хазрат Крганов, чĕлхе тĕлĕшĕнчен ЧПУн журналистика факультечĕн доценчĕ Маргарита Данилова, Руслана шкулта вĕрентнĕ учительсем, Çĕрпӳ районĕнчи Сăнав шкулĕнче тăрăшакансем, пулăшнă. Коран 114 пайран тăрать. Руслан Сайфутдинов вĕсене пурне те куçарнă, анчах хальлĕхе 40-шне çеç редакциленĕ.

Руслан «ÇХ» вулаканĕсене ĕмĕт-тĕллевĕпе паллаштарчĕ. Вăл Мускавра хăйĕн специальноçĕпе ĕçлесшĕн. «Пурнăçăма журналистикăпа тата ислампа çыхăнтарас килет», – пĕлтерчĕ вăл. «Чун савни те мăсăльман-им?» – вăрттăнлăха уçма ыйтрăм эпĕ. «Мăсăльмансен çураçнă хĕр тата арăм пур», – пулчĕ хурав. «Апла пулас мăшăрун çак тĕне пăхăнмалла», – татах кăсăклантăм. «Юратнă çыннăм хăть те кам пултăр, анчах вăл ислам тĕнне йышăнĕ», – çирĕппĕн хуравларĕ каччă.



Корана чăвашла куçарни – пархатарлă ĕç. Руслан Сайфутдинов çак утăма пĕрремĕш тунăшăн чăннипех те мухтава тивĕç.

**Ирина АЛЕКСЕЕВА.**

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# Пĕчĕк “кĕлте”




Вячеслав Кондратьевпа, Слован Савкай сăвăçпа, Шупашкарти Агрегат завочĕн «Рабочая жизнь» хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ чухне паллашнăччĕ. Вăл – механика цехĕн электросварщикĕччĕ. Çак специальноçа Вячеслав çара кайиччен алла илнĕ. Шӳтлеме, мыскара каласа кăтартма юратакан каччă предприятири хаçата çырсах тăратчĕ, вулакансене малта пыракансемпе, ырă тĕслĕхсемпе паллаштарма тăрăшатчĕ, вырăнти радиохаçат директорĕнче те тăрăшатчĕ.

Вячеслав Кондратьев Мускаври М.В.Ломоносов ячĕллĕ патшалăх университечĕн журналистика факультетĕнче те пĕлĕвне тарăнлатрĕ. Университет, хула хаçачĕсенче корреспонденци, сăвă сахал мар пичетленĕ вăл. Аслă шкул дипломĕпе пĕрлех ăна СССР Журналистсен пĕрлĕхне йышăннине çирĕплетекен удостоверени панă.

Слован Савкайпа пĕрле «Коммунизм ялавĕ» /хальхи «Хыпар»/ хаçатра ĕçленĕ çулсенче Украина ССРĕн Карпат леш ен облаçĕнчи Мукачево районне кĕрекен Свалява ялĕнчи санатори-кану çуртĕнче сывлăха çирĕплетрĕм. Унта сипленекен-канакан çынсене вăл хăй чăнахах сăвă ăсти пулнине ĕнентерме пултарнăччĕ. Ыйтакан кашни çын валли кĕске вăхăтрах сăвă е тăват йĕркелĕх хатĕрччĕ. Ун тавралла хĕрарăмсем кăлăк чăххи чĕпписем пек пуçтарăнатчĕç, никам кăмăлне те хуçмастчĕ.

Вячеслав Николаевича хăй пурăннă чухне сăввисемпе калавĕсене кĕнекене пухма пĕрре çеç мар сĕннĕ-хистенĕ. Çавăнпах-и тен – сăвăçăн çак йĕркесем çуралнă та:

*Ман сăвăрман та сапаланчăк*
*Сăввăмсене хаçат-хиртен*
*Пуха-пуха çыхсан аванччĕ*
*Пĕр пĕчĕк, кăмăллă кĕлте...*

Кĕçĕн çулти ачасем валли çырнă сăввисене «пĕр кĕлтене» пухма Петĕр Çăлкуç сăвăç тăрăшрĕ. Унта калавсем те пур. «Тĕлĕнекен чечек» кĕнекери сăвă-калав та шăпăрлансене ĕçе, пурнăçа юратма вĕрентет, шкулта çине тăрса ăс пухни ĕмĕр тăршшĕпе пулăшса пынине кăтартса парать.

Эпĕ Слован Савкайăн сăввисене пуçтарса «Анне пилĕ» кĕнеке кăлартăм. Хайлавсене «Çеçке çурчĕ улмуççи те çĕмĕрт», «Чăвашлăхсăр ăшăм вăркать», «Хура пĕлĕт тăкать куççульне» ярăмсене уйăрнă. Кĕнеке редакторĕ – Ольга Федорова.

Кĕнекери сăвăсем – курăмлă та сăнарлă, ырă та тунсăх туйăмлă. Автор кирек хăш тăрăхра пулнă чухне Чăваш çĕрне те манманнине, унтан вăй илсе тăнине çирĕплетет.

Вĕсенчи тĕп шухăш – юлташа каланӑ-асăрхаттарнă чухне юнашарри те илттĕр тени.

Пилĕк çаврăмлă «Анне пилĕ» – вулаканшăн пурнăç тĕкĕрĕ, ăс параканĕ:

*Калаттăн эсĕ чĕререн*
*Ăнлантарса сăпайлăха:*
*«Пух, ывăлăм, ăс-тăн, вĕрен,*
*Пул кирлĕ çын эс халăха.*
*Ĕçе юрат, ан тар унран,*
*Ĕç этеме илем кӳрет.*
*Ан каппайлан, ан кул çынран,*
*Йышра кăна сумра çӳре»...*

**Осип АЛЕКСЕЕВ.**

# Ăстасем тĕлĕнтереççĕ

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Нумаях пулмасть çеç Раççейĕн тĕп хулинче, Португалире иртнĕ фестивальсенчен таврăннă Андрей Молоков Латвие кайма хатĕрленет.

– Çав ăмăртусенче юлташсемпе тĕл пулатăп, вĕсен ăсталăхне ăша хыватăп. Хамăн пултарулăха туллин кăтартма тăрăшатăп, – терĕ чăваш скульпторĕ.

“Асамлă хăйăр” фестивальте вун-вун ăмăртăва хутшăнакан ăстасем кăна мар, çак искусствăпа тин çеç паллашма пуçланисем те хăйсене тĕрĕслеççĕ. Юхан шыв портĕнчи тӳремре ĕнер И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн студенчĕсемпе ЧР культура училищин вĕренекенĕсем ĕçе кӳлĕнчĕç, тăватă ушкăн юмах геройĕсене “чун кĕртеççĕ”. Ăмăрту пуçаруçи кунпа та лăпланасшăн мар – кĕçех вăл тăван халăх мифологийĕнчи пĕр-пĕр сăнара эрешлĕ.

– Хĕлле иртнĕ пăр тата юр скульптурăсен фестивальне чăваш мифологине халалланăччĕ, хамăр тăрăхра йĕркеленекен кирек мĕнле мероприятире те тăван халăх сĕмĕ пулмалла, çавăнпах Апайтар асамçа ăсталăп. Аякран килекен хăнасем те чăвашлăхпа паллашайччăр, – сăмах çăмхине сӳтрĕ Андрей.

Кӳлепесене курма-пахалама тĕв тунисем тĕлĕнеççĕ: шалкăм çумăр çусан та, çил вĕрсен те хăйăр юхса анмасть, скульптура арканмасть. Çакăн вăрттăнлăхĕ пур – кӳрсе килнĕ хăйăра малтан хытараççĕ, кĕлеткене хатĕрлесе çитерсен вара çилĕмпе сирпĕтеççĕ.









– Хăйăрпа аппаланма йывăр, çапах пăрпа тăрмашнинчен çăмăлрах. Катăлса ӳкнĕ пăра каялла çыпăçтараймăн, хăйăр кӳлепене вара çăмăллăнах “саплайăн”, – палăртнăччĕ конкурсçăсем.

Юмахсенчи сăнарсене тĕпе хурса хатĕрленĕ хăйăр кĕлеткесем куракансене хăйсен илемĕпе хĕл лариччен савăнтарĕç.

**Дмитрий МОИСЕЕВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



ПĔЛМЕ ИНТЕРЕСЛĔ!

# Ултав серепи пысăк, е Виртуаллă юрату çинчен

**Интернет çулсерен аталанса пырать. Тĕнчипех сарăлнă серепе халĕ никамшăн та çĕнĕлĕх мар. Ăна вĕтĕр-шакăртан пуçласа тивĕçлĕ канăва тухнисем таранах шĕкĕлчеççĕ. Сайтсен шучĕ çумăр хыççăн тухнă кăмпасем пекех ӳсет. «Netcraft» компани 2011 çул тĕлне ĕçлекен 270 миллиона яхăн сайт тупса палăртнă. Паллах, Интернет пирĕн пурнăçа самаях çăмăллатать: телевизор-радио ямасăрах çĕнĕ хыпарсемпе паллашма, лавккана каймасăрах япала туянма пулать. Тата... хĕрӳ туйăм шыракансен хĕрпе е каччăпа паллашма май пур. Тепĕр тесен, кун пирки çамрăксене ăнлантарма кирлĕ мар – вĕсенчен нумайăшĕ паллашу сайчĕсене шĕкĕлченĕ-тĕр.**



### Тĕнчере тĕрлĕрен кĕнчеле

Çакнашкал сайтсенчен пĕри куç умне лекрĕ. Пĕчченлĕхе сирме шантаракан реклама Интернетра кашни кĕтесре тенĕ пекех тĕл пулать. Кăсăклăх çуралчĕ. Сайтпа паллашнă май кулмалли те, хурланмалли те чылай тупăнчĕ. Мĕншĕн тетĕр-и? Ара, унта мĕн тĕрлĕ çын çук пулĕ! «Эпĕ санăн ĕçкĕç кӳршӳ» ятлăскер тӳрех куç умне тăрăнчĕ. «Сире манпа намăс пулĕ, анчах кичем мар. Малалла вуласан интреслине нумай пĕлĕн. Енчен те эпĕ сире кăсăклантармасан – çухалăр кунтан», – тенĕ хăйĕнпе кĕскен паллаштарса. Паллах, ку сăмахсенчен пăрăнса иртеймĕн. Малалла вуласан çӳç-пуç вирелле тăрать. «Ĕçкĕç» пĕр банкра президент пулнине ĕнентернĕ. Унăн сăн ӳкерчĕкне пăхсан вара /малти икĕ шăлĕ çук/ ку шухăшпа, каçарăр та, килĕшеймĕн. Анджелина Джолипе вырăн ăшăтнине пĕлтернĕ. Кулăшла паллах. Анчах çакăн йышши суеçĕсем хăйсемпе паллаштарнине курсан сайтра таса туйăмлă çын пурри иккĕлентерет. Вăрттăн тĕл пулма ĕмĕтленекен те чылай кунта. Ахăртнех, çемье çавăрнăскерсем. «Пылаккине» айккинче шыраççĕ-тĕр. Тĕлĕнмелле те, «пĕчченлĕх утравĕ» çинче хăйсен иккĕмĕш çуррине шыракансен йышĕнче 60-70 çулсенчисем те пур. Хăшĕ-пĕри, тен, чăнахах та юратăвне тупас шанчăкпа сайтра регистрациленет пулĕ. Анчах ку е вăл çын мĕнле шухăшлă пулнине виртуаллă калаçу урлă пĕлейместĕн. Суя ятпа кăмăла ирĕлтерекен сăмахсем çырма та пулать-çке. Шкул ачисен, студентсен пуçне çавăрма уйрăмах меллĕ. «Çамрăк йывăç час авăнать», – тенĕ ваттисем. Пурнăç тути-масине активсе курманскерсем куçа-куçăн пĕрре те курман çынна çур сăмахранах ĕненеççĕ. Çавăнпа виртуаллă савнипе асăрханулăрах пулмалла. Унсăрăн ултавçă аллине лекесси те инçе мар.

### Тусан çеç мăкăрланса юлĕ

Паллашу сайчĕсем спамерсенчен хӳтĕлес тĕллевпе регистрациленнĕ çыннăн электрон адресне вăрттăнлăхра усраççĕ, никама та пĕлтермеççĕ. Анчах ирсĕрсем тĕрлĕ мел шухăшласа кăларса кирлĕ информацие “тупма” пултараççĕ. Тĕслĕхрен, сайтра пĕр-пĕр ятпа регистрациленеççĕ те илемлĕ сăн ӳкерчĕк вырнаçтараççĕ. Хитре каччă е хĕр кама илĕртмĕ? Паллашăва хăвăртлатас тĕллевпе ултавçăсем электрон адреса ыйтаççĕ. Юрату тыткăнне лекнĕскерсем нумай шухăшласа тăмаççĕ – пĕлтереççĕ. Кирлĕ информаци – спамерсен аллинче! Çавăнпа пĕлнĕ-пĕлмен çынна чун алăкне уçса кĕртме ан васкăр. Ваттисем çиччĕ виçсе пĕрре касма хушаççĕ.

«Альфонс» сăмаха та илтмен мар-тăр. Хĕрарăм укçи-тенкипе пурăнакан арçынна çапла калаççĕ. Çакăн йышши ирсĕр паллашу сайчĕсенче те сахал мар. Альфонс хĕр-хĕрарăм чĕрине çăмăллăнах çавăрать. Унăн хăйĕн меслечĕ. Арçын сайтра ытларах чухне хăйĕн сăн ӳкерчĕкне мар, пăхса ытарма çук илемлĕ сăн-питлинне вырнаçтарать. Хайхискер Интернетран уçланă юрату сăввисемпе, чĕрене ирĕлтерекен сăмахсемпе усă курса темиçе хĕр патне çыру шăрçалать. Альфонс пурнăçĕ, ĕçĕ пирки тĕпченине юратмасть, ыйтусенчен тарать. Пĕрремĕш тĕл пулура арçын хăйне питĕ сăпайлă тытать, шанчăка кĕресшĕн çунать. Туслăх çирĕпленсен çакскер укçа-тенкĕ çитменни, бизнес уçмалли пирки «нăйлама» пуçлать, çутă пуласлăх шантарса хĕрарăма хăйĕн ячĕпе кредит илме хистет. Çут çанталăкăн черчен пайĕ ăшă сăмах каланине юрататать-çке. «Йывăр лару-тăрăва лекнĕ савнишĕн» тем тума та хатĕрскер банкран кивçен илет, кайран вара çурăк валашка умĕнче ларса юлать... Альфонса тăрă шыв çине кăларма ансат. Укçа-тенкĕ çуккине е ĕçре йывăрлăхсем сиксе тухнине пĕлтерĕр çеç – «савни» хыççăн тусан мăкăрланса юлнине те кураймăр. Çакăн пек çынпа калаçса вăхăта сая ямаллах-ши?

### Укçашăн хапсăнса

Паллашу сайчĕ урлă пуяс текен те чылай. Калăпăр, аякри хулара пурăнакан каччăпа е хĕрпе паллашрăр. Лешĕ хăнана пыма шантарать. Анчах килме тухсан унăн çул çине тухма тăруках укçа пĕтни çиеле тухать. Хайхискер укçа ярса пама ыйтать. Çак капкăна каччăсем тăтăшах çакланаççĕ. Пукане пек илемлĕ хĕрĕн сăн ӳкерчĕкне курсан тĕнче юмаха çаврăнать. Каччă пикене шанса укçа-тенкĕ ярса парсанах çыхăну «ăнсăртран» татăлать. Пирĕшти пулман та тейĕн. Е, калăпăр, виртуаллă чун савни сирĕнпе телефонпа калаçасшăн. Анчах пуплеме унăн енчĕкĕ çӳхерех имĕш. Юратăвĕн сассине илтессишĕн çунакан хĕр /каччă/ пĕр тăхтамасăр лешĕн телефонĕн счечĕ çине укçа хурать. Кун хыççăн унăн ятне манма тивĕ – виртуаллă юлташ çил евĕр çухалĕ.

Паллашу сайтĕнче регистрациленнĕ чухне укçа ыйтаççĕ-и? Эппин ку каллех – ултав. Эсир – ирсĕрсен аллинче. Йĕркеллĕ сайт кун пек хăтланмĕ, хăйĕн тĕнчине нухратсăрах кĕртĕ.

Пĕр форумра çак ыйту тавра хĕрӳ калаçу пуçарнă. «Паллашу сайтĕнче чăн юратăва тупайăн-и?» – кăсăкланнă пĕри. Ыйтăма хутшăннисенчен 37% сайтра шăпа пӳрнине тĕл пулма май пуррине шанаççĕ, 34% кипкепе çуралнисем çеç юратăва тупаясса ĕненеççĕ, 17% пачах хирĕçленĕ. Ыттисем автомашина, хваттер пуррине пĕлсен кăна паллашма пултарнине палăртнă.

Çамрăк чухне, паллах, юн вĕрет, çĕнĕ тус-юлташ тупас килет. Анчах паллашу сайчĕсенче тимлĕрех пулмалла. Ыттисен айванлăхĕпе усă куракан чылай унта. Йĕксĕксенчен мĕнле хӳтĕленмелле? Тупсăмĕ ансат: палланӑ-палламан çынна хăвăр çинчен пĕтĕмпех ан пĕлтерĕр, виртуаллă юрату «хӳрине» тытма ан васкăр.

**Ирина АЛЕКСЕЕВА.**